## Ку кĕнекесене Ананьева А. В. библиотекарь вулама сĕнет

**Павловская, А. Караслă пыл: роман / А. И. Павловская. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2019. - 336 с.**




Романри ĕçсем çирĕммĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ. Тĕп сăнар - хăйĕн пурнăçне çутçанталăка сыхлас ĕçпе ĕмĕрлĕхех çыхăнтарнă Анисса. Вăрманçă вăл. Хăйсен тăрăхĕнчи Шетешке ятлă вăрмана тасатса, çĕнетсе тăрас, упрас тесе çĕрне-кунне пăхмасăр ĕçлет. Вăрман чĕлхине пĕлекен çын тесех калас килет ун пирки. Йывăç-курăкпа кайăк -кĕшĕке сăмахсăр ăнланакан лесник хăйĕнпе çумăн пурăнакан çынни, юратнă мăшăрĕ, ултавçă пулнине кая юлса асăрхать. "Упăшки пăрахнă хĕрарăм" пулса тăни унăн чунне çав тери ыраттарать. Çапах та хуçăлмасть Анисса, пурнăç илемне çухатмасть. Унăн малашнехи шăпи телейлĕ пуласси роман вĕçĕнче курăнсах тăрать.

**Волков, А. Атте çути: роман / Анатолий Волков. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2018. - 368 с.**




А.Н. Волков –паллă хирург çеç мар, пултаруллă çыравçă та. Хайлавĕсенче вăл тухтăрсен, уйрăмах хирургсен, пурнăçĕпе йывăр ĕçĕ-хĕлне, кăмăл-туйăмне уçса парать.

«Атте çути» романра Анатолий Никандрович хăйĕн пурнăçĕпе паллаштарать. Вăл ачалăхĕ, тухтăр пулас ĕмĕчĕ еплерех çурални, çак пархатарлă ĕçри йывăрлăхсене епле çĕнтерни çинчен каласа парать.

**Алендей, В. Курăксене тайса çил вĕрет: роман / Василий Алендей. - Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2020. - 256 с.**




Романра Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăн колхозлă ял мĕнле аталанса пынине кăтартса панă.Пилешкассинчи пурнăç лайăх еннелле улшăнасси пĕтĕмпех унта пурăнакансенчен килет. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр, вăй-халне шеллемесĕр ĕçлекенсем те пур, коллективлă хуçалăх пурлăхне сĕлĕх пек ĕмекенсем те çук маар. Романри мĕнпур ĕç-пуç Вассапа Тихон Ивановичăн çемьери хутшăнăвĕсем урлă уçăлса пырать. Хăйĕн пурнăçне канлĕрех, пуянрах, тутлăрах, меллĕрех, ăшăрах тума тăрăшакан Тихăн Вассаран пачах расна çын. Арăмне те кĕсьери кĕмĕл вырăнне хурать вăл, çын куçĕнчен пытарса усрасшăн. Телейлĕ пулайĕ-ши унпа Васса?